26-Я
АБОНЕМЕНТ

ПАРАТТĂВ

# ХĔРЛĔ ÇАРПА ХРЕСЂЕНСЕМ



Ђăваш Республĕк. Кĕнеке
— Кăларакан Уйрăм —
Шупашкар — 1926 çул.

ЯБОЧЕМЕНТ

355
1

ПАРАТТӐВ

# ХӖРЛӖ ҪАРПА ХРЕСҪЕНСЕМ

ТАНИЛӐВ куҫарнӑ

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

15.194

Ҫӑваш Респуплӗкӗнҫи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑм
ШУПАШКАР — 1926 ҫул

Г. Чебоксары, типография
Школы Ф.З.У. при Чуваш-
——— госиздате. ———
Чувашлит № 210 Зак. № 21
—— Напеч. 3000 экз. ——

## ХЁРЛЁ ÇАРПА ХРЕСЂЕНСЕМ.

Мён тума пуршуйсем хатёрленеççёши? 1914 çулта вăрçă пуçланса кайсассăн, пур патшалăхсем те пётём тёнђене йантăратађёçё: ку вăрçă пётсессён, урăх пулмасť, çавăнпа малалла пысăк çарсем те кирлё мар, çарсене тытма, тăрантарма нумайах укçа та кирлё пулмасť, тетђёçё. Анђах халё урăхла курат-пăр. Çав 1914 çулта пуçланса кайнă вăрçăра пысăк патшалăхсем (Анкли, Франтси, Иттали) Керманине, Австрине, Туртсине çёнтерђёç. Халё çав çённё ха-лăхсене сывлама та памасăр хёстереççё. Вёсене çар-сем те нумай тытма хушмаççё. Анђах хăйсен çарёсене шутласа пăхсассăн, пирён Канаш ирёкён çарёнђен пёр мёлйун ытларах. 1913 çултан пуçласа мён ђул çав çарсем пирки укçа тăкнине танлаштарса пăхсас-сăн, каллах пёр мёлйарт çурра йахăн ытлашши курăнаť.

Пуршуаллă патшалăхсем унпала кăна тăранмаççё халё. Акă нумайах та пулмасť, Румыни, çар пысăкрах пултăр тесе, вун виçё çул хушши саппасра тăра-каннисене салтака илђё. Нумай хёçпăшал хатёрлерё. Тата Пољшăпа Латви патшалăхёсем çине пăхсассăн, кусем те питё нумай шыв айёнђе çӳрекен луткăсем, минăсем хатёрлеççё. Тата ытти патшалăхсем те, вăрçă вăхăтёнђе ушкăнпарах пёрлешсе тухас тесе,

пĕр пĕрinпе курăнса калаçаççĕ. Акă Анкли пирĕн Канаш ирĕкне çывăхри тинĕс варринђи типĕ çĕрсене ыйтат̆. Çавсем çине пулас вăрçă валли тĕрлĕ ерпирсем (вăрçă вăхăтĕнђе кирлĕ йапаласем) хатĕрлесшĕн. Капла туса хурсассăн, Анкли пирĕн Канаш ирĕкĕ çине тĕрлĕ йеропланседемпе çар йарса пĕр икĕ виçĕ сехет хушшинђех питĕ пысăк сийенсем тума пултарат̆.

Ку мĕне пĕлтеретши? Ку ак çакна пĕлтерет: пĕтĕм пуршуаллă патшалăхсем пĕрпĕринпе вăрçма хатĕрленеççĕ. Анђах пирĕн Канаш ирĕкĕ çине пурте пĕрле канашласа ђасрах килме пултараççĕ; мĕншĕн тесен, пирĕн ĕçлекенпе хресђенсем пĕтĕм пурăнăç ĕçне хăйсен аллинђе тытса тăраççĕ.

Канаш ирĕкĕ вăрçасшăнши? Çук, вăрçасшăн мар. Микулай патша пуçланă вăрça та вăл̇ пĕтерђĕ. Вунпилĕк мĕлйуна йахăн хресђенсене киле йађĕ. Анђах, пуршуйсем çĕнĕрен хытă тапранса Канаш ирĕкĕ çине килнипе кăна, Хĕрлĕ çар тумалла пулђĕ пулсан та, малтан ирĕккĕн пыраканнисене кăна çара илђĕ, ун хыççăн кăна мопилисатсипе илђĕ. Апла илмен пулсассăн, пуршуйсем каллах патшана вырăна кӳртсе лартма пултарĕђĕç. Пуршуйсемпе вăрçмађи малтан комуниссен парттинђе тăракансем карĕç. Вĕсен тавра ĕçлекенпе хресђенсем пухăнђĕç. Çапла вара пирĕн аслă, мухтавлă Хĕрлĕ çар вăрçă пĕтес умĕн пилĕк мĕлйунтан та иртсе карĕ. Пуршуйсене çĕнтерсессĕнех, Хĕрлĕ çара сахаллатнăçем сахаллатса пыђĕç. Хађхи вăхăтра пирĕнни пек сахал çар урăх ук та, теме пулат̆.

Ђăнах та, акă франтсуссем çине пăхсассăн, вěсен кашни вунă пин çын пуçне икě çěр салтак тивет; Пољшăпа Румынин—çěр салтак. Хăйсене пирěн Канаш çěрěпе танлаштарса пăхсассăн, питех те пěђěк патшалăхсем. Франтси пирěн пěр Арханкěлски кěпěрнинђен те пěђěк. Пирěн кашни вунă пин çынна хěрěх пěр салтак кăна тивет.

Канаш ирěкě пур патшалăхсене те темиçе хут та ђěнсе каларě: атăр çарсене тата пěђěклетер, тесе, анђах вěсем итлемерěç, халě те итлемеççě. Çарěсене ӳстернěçем ӳстерсе пыраççě.

Йут патшалăхсем çарěсемпе укçа тăкнине пăхсассăн, акă çакăн пек курăнат: франтси патшалăхěнђе çар валли патшалăх хыснинђен кайакан укçа кашни çынна вунтăвата тенкě лекет; Пољшăра—вунпěр тенкě; Естонипе Латвире—çиђěшер тенкě; пирěн Канаш ирěкěн—виçě тенкě.

Хěрлě çар кама сыхлатши? Ěçлекенпе хресђене, вěсен ěçěсене сыхлат. Пěтěм Раççейри канашсен 9-мěш пухăвěнђе кайранхи хут Ленин йулташ акă çапла каласа хăварнă: Йулташсем, йаланах хатěр пулăр, Хěрлě çара хăвăр куç шăрçине сыхланă пек сыхлăр, тенě. Ленин йулташ малалла та вăрçă пулассине пěлсех тăнă, мěншěн тесен, халě Канаш ирěкě Раççейре кăна, ытти патшалăхсенђе пуршуйсем ěçхалăхěн ěнсисем çинђех лараççě. Çавăнпа вěсем пирěн Канаш ирěкне пěтěм ђунтан, ђěререн курайманççě. Хăйсем урăх вăрçас мар тесе, хут çинђе алă пусса сăмах та параççě. Анђах çав сăмахсене çавăнтах улăштараççě. Пирěн хаљђенех çакăн

пек вăйлă Хĕрле çар пулман пулсан, малалла та хамăр çара тĕреклентермесен, тăшмансем пирĕн çине вăрçăпа килесси курăнсах тăрать. Çавăнпа та Ленин йулташ Хĕрлĕ çара питĕ хытă, лайăх пăхса усрама хушса хăварнă.

## Канаш ирĕкне сыхлама мĕн кирлĕши?

Кун çинђен калаçиђђен, пирĕн тавçăрса илес пулать—ўлĕмрен кампала, йепле вăрçă пулассине. Вăрçа пуршуйсенђен пуçне никама та тапратас çук. Çавăнпа пирĕн çавсемпе вăрçмалла пулать. Тĕнђери ĕçлекенсемпе хресђенсем, Канаш ирĕкĕ çине питĕ хытă шанаççĕ. Çавăнпа Канаш ирĕкĕ ђĕнсессĕн, пурте пĕрлешсе пуршуйсене хирĕç тăма пултараççĕ. Анђах çав пуршуйсем халĕ питĕ вăйлă. Акă халĕ Киттайрипе Мароккăри ĕçхалăхĕсем вăрçаççĕ. Вĕсен ĕнсисем çине йăлтах улăхса ларасшăн. Апла пулсассăн, епир те пуршуйсем Канаш ирĕкĕ çине тата вăйлăрах килессе кĕтсе тăма пултаратпăр. Килме тытăнсан та, пĕр йенђен кăна килĕç, тесе калама çук, тĕрлĕ йенђен килме пултараççĕ: хĕвел тухăçĕнђен те, хĕвел анăçĕнђен те, кăнтăртан та, çур-çĕр йенђен те. Пирĕнпе танлаштарса пăхсассăн, пасăрах каланăђђĕ, пуршуйсен пуйанлăхĕ питĕ пысăк, çавăнпа пулас вăрçăра тĕрлĕрен лайăх вĕрентнĕ çарсемпе тухма пултараççĕ. Ђукун çулсем лайăххипе тепĕр çĕре питĕ ђас куçма пултараççĕ. Çакă иртнĕ вăрçăсем хыççăн пуршуаллă патшалăхсем тата темиçе тĕрлĕ тупăсем, пăшалсем, сывлăшра та, шывра та, çĕр çинђе те

вăрçмалли машшинсем кăларђĕç. Вĕсене хирĕç авантарах хатĕрленмелли курăнсах тăрат̆.

## Пирĕн вĕсене хирĕç мĕн пурши?

Пирĕн çар, вĕсеннипе танлаштарсан, нумай мар, мĕн пурĕ те пилĕк çĕр утмăл икĕ пин салтак кăна, вĕсем те темиçе теçеткă пин çухрăма сапаланса Канаш ирĕкин ђиккисене сыхласа тăраççĕ. Хуçайствă тĕлĕшĕнђен вăйлăланасса вăйланатпăр та, анђах вăрçăђђенхи вăхăта кăçал çитеймерĕмĕр халĕ. Укçа тĕлĕшĕнђен илсессĕн, пире хресђенпе хапрăк хуçайствине хытăрах треклентерме питĕ нумай кирлĕ. Тӳррипех каласан, епир пĕр тĕлĕшрен кăна пуйан: пирĕн халăх питĕ нумай. Анђах çав халăхран вăйлă çарсем хатĕрлеме май килмест. Май килес пулсан та, пирĕн Канаш ирĕкĕ апла тăвасшăн мар, Хĕрлĕ çара сахал тытса, вăрçă тавраш тапратас килмессине епир пĕтĕм тĕнђене кăтартатпăр. Тепĕр йенђен, Хĕрлĕ çар пирки нумай укçа тăксассăн, хуçайства малалла ӳстерес ĕç те питĕ пĕђĕкĕн каййма пултарат̆. Çавăнпа ку ĕç çине Канаш ирĕкĕ çакăн пек пăхат̆: нихăçан та вăрçă тавраш ан пултăр, тет. Анђах, пуршуйсем пире тапăнсассăн пĕтĕм ĕçлекенпе хресђенсен вĕсене хирĕç вăрçăпа тухас пулат̆. Ку тĕлĕшрен пирĕн халех ĕçлекенпе хресђенсем çар ĕçне кил хушшинђе вĕренђĕр, тесе тăрăшмалла. Пирĕн вăрçă вăхăтĕнђе Хĕрлĕ çар валли мĕн кирлине ытлашшипех тăратса пама тăвас пулат̆.

**Хĕрлĕ çара кампа тултараççĕши?**

Пирĕн халĕ кашни çул пĕтĕм Раççейĕпе пĕр мĕлйун та икĕ çĕр пин çынна йахăн çара кайаççĕ. Вĕсен хушшинђе салтака йурăхсăррисем виçĕ çĕр пин, виç çĕр алă пине йахăн. Салтака йурăхлисем сакăр çĕр аллă пин—тăхăр çĕр пин çынна çитеççĕ. Хĕрлĕ çара сахаллатса пынипе, тата кăна вĕрентнипе, Канаш ирĕкĕ кашни çул касăрмара икĕ çĕр çитмĕл пин çынна йахăн кăна вĕрентме пултарат̆. Салтака йурăхлисене пурне те касăрмара вĕрентес пулсан, пирĕн Хĕрлĕ çар кашни çул пĕр мĕлйун та çиђĕ çĕр пин çынна çитĕђђĕ. Анђах паçăрах каланăђђĕ, пурнете касăрмара вĕрентме пултараймастпăр, çавăнпа ытлашшийĕ килех йулат̆. Мĕн тумаллаши çав йулаканнисемпе? Канаш ирĕкĕ çавсене килтех, харкам хăй хуçайствинђен инçе илсе каймасăр вĕрентмелле тунă. Çапла вырăнта вĕрентнине вырăсла „территориальная система военной подготовки“ теççĕ. Çапла вара Хĕрлĕ çар икĕ пайа уйăрăлат̆: пĕр пайĕ, çуралнă çĕр шывран инçе кайса касăрмара вĕренет; тепĕр пайĕ, вырăнта вĕренет. Çак вырăнта вĕренекен салтаксене вырăсла „переменниксем“ теççĕ. Касăрмара икĕ çул вĕренеççĕ. Килте пилĕк çулђен вĕренмелле, анђах вĕçĕмрен мар, кашни çулталăк хушшинђе пĕр икшер уйăх кăна. Мĕн пурĕ пилĕк çул хушшинђе—çулталăка йахăн вĕренме тивет.

Хĕрлĕ çартан таврăнакан салтаксем килте хăйсем вĕреннине манса кайма пултараççĕ. Çавăнпа вĕсене те тăрсан, тăрсан вырăнта вĕрентмелле тунă. Ђăнах та, Хĕрлĕ çар ĕçĕ çăмăл ĕç мар. Лайăхрах

пĕлес тесен, ҫылай вĕренмелле. Ҫавӑнпа, касӑрмасенҫе вĕрентнĕ ҫух ҫӑмӑлтарах пултӑр тесе, присӑва кĕриҫҫенех пĕр хут вырӑнта вĕрентмелле тунӑ. Ҫавна вырӑсла „допризывная подготовка“ теҫҫĕ. Ҫак иртнĕ ҫул ҫавӑн пек вĕренсе тухнисем ,пĕтĕм Раҫҫейпе сакӑр ҫĕр хĕрĕх икĕ пин ҫын. Пурте ҫавсем кӑҫал присӑва кĕреҫҫĕ. Кӑҫал тата ҫав „допризывная подготовка“ урлӑ 1904, 1905 ҫулта ҫуралнисене, тата хӑшне-хӑшне ыттисене те вĕрентсе кӑлармалла пулаť. Пирĕн ҫӑваш респуплĕкĕнҫе ҫавӑн пек кӑҫал вĕрентмеллисем вун тӑватӑ пин те 8 ҫĕр ҫын ытлараха ҫитет. Капла туни пирĕншĕн питĕ те меллĕ. Пĕр йенҫен, ку касӑрмасенҫе сахалтарах вĕрентме пулӑшаť, тепĕр йенҫен, кайран кайран епир йӑлтах ҫар ĕҫне вырӑнта вĕрентмелле туса йама пултаратпӑр. Ҫак кайран каланӑ пек туса йанине, йӑлтах пурне те вырӑнта вĕрентмеллине вырӑсла „милиционная система“ теҫҫĕ Ĕҫ лайӑхланнӑҫем лайӑхланса пыраť, анҫах пӑртак шӑйрӑксем пур халĕ. Акӑ топрисывнĕксене вĕрентмелли вырӑнсем наҫартарах, ҫуралнӑ ҫĕр шывран инҫе тӑраҫҫĕ. Хӑшхӑш ҫĕрте ҫирĕм пилĕк ҫухрӑмран ҫĕр ҫухрӑма йахӑн та пур. Ҫавӑнпа ҫӳреме питĕ инҫе. Пухӑнмалла ҫĕрсенҫе ҫиме тĕлĕшĕнҫен те аванах мар. Кун пек пысӑк ĕҫе малалла йарас тесен, хресҫен халӑхĕ хӑй те питĕ хытӑ тӑрӑшса пулӑшмалла. Малашне те Канаш ирĕкĕн хуҫайстви ҫакӑн пекех лайӑхланса пырсассӑн, ҫак ҫар ĕҫне килте вĕрентес ĕҫ те лайӑхланĕ, ĕҫлекен халӑхшӑн ҫара кайас ĕҫ те ҫӑмӑл пулĕ, Канаш ирĕкĕ те питĕ вӑйлӑ тĕреклĕленĕ.

## Пирĕн Хĕрлĕ çар.

Нумайах та пулмасť, çар ĕçĕпе тĕп саккун тухрĕ. Çавăн тăрăх, Хĕрлĕ çарта пилĕк çул тăмалла: икĕ çул касăрмара, виçĕ çул килте курма йанă салтак вырăнĕнђе шутланса тăраť. Капла туни акă мĕншĕн лайăх: салтакран йăлтах киле йаман çын, хăй ţăнă Хĕрлĕ çарăн ђаçтне астусах тăраť, çавăнпа çар ĕçне те мансах каймасť. Икĕ çултан йăлтах саппаса йанă çын, çар ĕçĕ çинђен шухăшлами пулаť. Кайран кайран йăлтах манма пултараť. Вăрçă таврăш тапранас пулсассăн, çав килте вăхăтлă пурăнакан салтак каллех хăйĕн ђаçтне таврăнмалла. Унта ун валли вăрçă вăхăтĕнђе мĕн кирлĕ йапаласене малтанах хатĕрлесе хураççĕ. Малалла пĕтĕм халăх „допризывная подготовка“ урлă икĕ çул хушшинђе вĕренсе тухмалла, анђах кашни çул пĕрер уйăхран мала мар. Кашни салтак, Хĕрлĕ çартан килсессĕн, хĕрĕх çула çитиђђен саппасра тăмалла. Пурĕ Хĕрлĕ çар шутĕнђе çирĕм пĕр çул тăраť. Касăрмара вĕренес тĕлĕшĕнђен, патша вăхăтĕнђипе танлаштарса пăхсан, нумай кĕскетнĕ. Акă пеххотра патша вăхăтĕнђе 3 çул пулнă, халĕ 2 çул. Флотра 5 çул пулнă, халĕ 4 çул. Канаш ирĕкĕ вăхăта тата та кĕскетĕђђĕ, анђах пире вăрçă вăхăтĕнђе питĕ лайăх вĕреннĕ çар ушкăнĕсем кирлипе, тата килте пурăнакан халăх çар ĕçне сахалтарах пĕлнипе, май килмест. Лайăх пĕлме ытла кĕске вăхăтра вĕрентсе çитерме çук. Çакă „допризывная подготовка“ малалла тата лайăхланса кайсассăн, касăрмасенђе тата сахалтарах тытмалла пулĕ.

## Хĕрлĕ çар пурнăçĕ.

Хĕрлĕ çар пурнăçĕ халĕ аванланнăçем аванланса пырат̆. Çиме тĕлĕшĕнђен ӳпкелешни мĕнĕ туйăнмаст̆, анђах ытти патшалăхрисенђи пекех çитерейместпĕр халĕ. Çавăнпа çар çимине тата аванлантарас тесе тăрăшас пулат̆. Тумтир тĕлĕшĕнђен мĕн кирлине пурне те парса пыраççĕ, анђах выртмалли, вырăн çине сармаллисем, тата алшăллисем çитейmeççĕ халĕ. Çакăн пек пĕђĕк кăна йапаласем питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен, унтан салтакăн таса пурăнасси нумай килет. Таса пурăнни Хĕрлĕ çарăн сывлăхне нумай малалла йарат̆. Халђ Хĕрлĕ çарта ђирсем те çукпа пĕрех. 1923 çулта ђирсемпе 20% киле таврăнат̆ђĕç; 1924 çулта 4% кăна таврăнђĕç. Халĕ ĕнтĕ çĕр çынтан пĕр çын кăна таврăнат̆. Ку тĕлĕшрен Хĕрлĕ çар патша вăхăтĕнђи çартан нумай малта тăрат̆. Касăрмасем тĕлĕшĕнђен ĕç нађартарах, пурне те авантарахах тӳретмелле.

Патша вăхăтĕнђи салтак уйăхне 50 пус илетђĕ. Йалан килтисенђен пулăшу ыйтмаллат̆ђĕ. Хĕрлĕ çарта халĕ 1 тенкĕ те çирĕм пус илеççĕ. Франсус патшалăхин те уйăхне 60 пус кăна тӳлеççĕ. Анклире салтаксене укçалла тытаççĕ, çавăнпала унта нумайтарах тӳлеççĕ. Хĕрлĕ кăмантир, патша вăхăтĕнђипе танлаштарса пăхсассăн, виç пайĕнђен пĕр пайне кăна илет. Ĕç тĕлĕшĕнђен кашни кун 12 сехетрен кайа ĕçлемест.

## Пур халăхсем те Хĕрлĕ çарта пĕр пекши?

Хĕрлĕ çарта пур халăхсем те пĕр пек. Акă иртнĕ çул 1902 çулта çуралнисене салтака илнĕ ђухне çакăн

пекђĕ: вырăссем 64%, хоххолсем 22%, пелоруссем —4%, ытти вĕт халăхсем—10%. Патша вăхăтĕнђе хресъен халăхне çарта вĕренме питĕ хĕнђĕ, анђах вырăс çынни маррисене тата кансĕртерехђĕ. Вырăс ђĕлхине пĕлменнисене унтĕр-офитсерсем питĕ хытă хĕстеретђĕç. Халĕ пысăкрах вĕтĕ халăхсем, акă хоххолсем, тутарсем, хăйсен ђаçтĕсенђе вĕренеççĕ. Пирĕн ђăваш пеккисем вырăс ђаçтĕсенђех вĕренеççĕ, расна-расна пĕрĕр всвотсем, ротсем тăваççĕ.

## Хĕрлĕ çар кăмантирĕсем.

Пирĕн хĕрлĕ кăмантирсем пурте ĕçлекенпе хресђенсенђенех мар халĕ, тата ыттисенђен те пур. „Ыттисем" тесе уђрештенисенђе ĕçлекен ађисене, тата патша вăхăтĕнђе офитсер пулнисене калаççĕ. Ĕлĕкхи офитсерсенђен кам хăй ĕçĕпе те, ăсĕпе те Канаш ирĕкне ђунтан йуратнине кăтартнисене кăна хăварнă.

## Вĕренес ĕç.

Хĕрлĕ çарта салтак çумĕнђе тăракан пуçлăхĕсем, паçăрах каланăђђĕ, пурте пекех ĕçлекенпе хресђенсем. Ытти патшалăхсенђе офитсерсем пурте улпут ађисем. Пысăк офитсерсем самай пысăк пуршуй ађисем. Пирĕн те ĕлĕк патша вăхăтĕнђе çаплађђĕ. Хĕрлĕ çара вĕрентекеннисене ĕçлекенпе хресђенсенђен çеç суйланипе, 1922 çулта пĕтĕм кăмантирсем пурте тенĕ пекех çар ĕçне пĕртте вĕренмен çынсемђĕ. Халĕ ĕнтĕ çар ĕçне аванах вĕреннĕ кăмантирсем 90% çитет. Шкулсенђе кăна мар, кăмантирсем килте

те хăйсене малалла вĕренеççĕ. Саппасра тăракан кăмантирсемпе ĕç нађартарах пыраť халĕ. Вĕсем çар ĕçне вĕренес тĕлĕшрен питĕ кайа йулнă. Вĕсене вĕрентме те, укçа сахалтараххипе, хађђен тытăнманђĕ халĕ. Кăçал кăна ку тĕлĕшрен ĕç пуçланса карĕ. Хĕрлĕ çарăн ђаçтĕсенђе пĕђĕккĕрех кăмантирсене вĕрентсе кăларакан шкулсем пур. Çавсенђе çар ĕçне кăна вĕрентмеççĕ, тата халăх хушшинђе ĕçлеме хатĕрлеççĕ. Ку çар ĕçне вырăнта вĕрентнĕ ђухне питех те кирлĕ. Хĕрлĕ çарта салтаксене вĕрентес ĕç халĕ аванах пыраť. Кашни салтак çар ĕçне нумайтарах вĕренсе, лайăхрах пĕлес тесе тăрăшаť. Кăмантирсем те пĕђĕккĕн пĕђĕккĕн крушоксенђе вĕренеççĕ. Салтаксем, прокрам тăрăх вĕренмелли пĕтсессĕн, кашни кун клупсене, шкулсене çÿреççĕ. Ĕç çукрах вăхăтра аллисене кĕнеке тытса хăйсене хăйсем вĕренесшĕн тăрăшаççĕ.

## Хĕрлĕ çарта тистсиплинă тĕлĕшĕнђен йеплеши?

Тистсплинă тĕлĕшĕнђен Хĕрлĕ çарта питĕ хытă. Салтакран тарса çÿрекеннисене самай усал, ирсĕр ĕç тăвакан вырăнне хураççĕ. Иртнĕ çулта тарса çÿрекеннисем сакăр прођăна çитеђђĕ. Кăçал пин çынтан пĕр çын кăна. Капла пулсассăн та, Хĕрлĕ çарăн тистсиплинине тата хытăрах тума тăрăшаççĕ. Кашни салтакăн хăй ĕçне хăй тирпейлĕ, лайăх туса пырас пулаť. Ку тĕлĕшрен аслисен хăйсен малтан çул кăтартса пырас пулаť. Пуçлăхсем мĕн каланине пĕр ÿркенмесĕр, хирĕç каламасăр туса пырас пулаť.

## Икĕ наҕҕаљнĕкрен пĕр наҕҕаљнĕке куçас ĕç мĕлле пыраттши?

Револ̧утси пулнă хыççăн, пуршуйсемпе вăрçнă ҕухне кăмантирсем ĕлĕкхи офитсерсенҕен питĕ нумайҕĕ. Вĕсене питех шансах кайманнипе, вĕсем çумне комуниссен парттинҕе тăракансенҕен кăмиссарсем лартнăҕĕ. Халĕ ĕнтĕ кăмантирсен вырăнĕнҕе питĕ шанăçлă çынсем лараççĕ. Çавăнпа ĕçлекенпе хресҕентенех тухнă кăмантирсем çумне тата кăмиссарсем лартма кирлĕ мар. Çакна шухăшласа икĕ наҕҕаљнĕкрен пĕр наҕҕаљнăке куçа пуçларĕç, урăхла каласан, комиссарсене лартми пулҕĕç.

Кăмантирсем хушшинҕе парттире тăраканнисем те, тăманнисем те пур. Парттире тăраканнисем Хĕрлĕ çарти пур ĕçе те тума пулăшаççĕ: строй тĕлĕшĕнҕен те, партти ĕçĕпе те, политтĕккă тĕлĕшĕнҕен вĕрентес ĕçпе те. Хĕрлĕ çарăн ҕаçтĕсене парттире тăман кăмантирсен аллине йалтах параççĕ, анҕах партти ĕçне кăна памаççĕ. Парттире тăман кăмантирсене шанни комуниссен парттин политтĕкне пĕлтерет: комуниссен партти пĕтĕм парттире тăман халăха Канаш ирĕкĕн çĕнĕ пурăнăç тăвас ĕçе йертме тăрăшат.

## Хĕрлĕ çар—кашни çын валли питĕ пысăк шкул.

Хĕрлĕ çарта пĕр çар ĕçне кăна вĕрентмеççĕ, ытти çутта тухас ĕçе те вĕрентеççĕ. Ку ĕç касăрмара та пырат, вырăнта вĕрентекен Хĕрлĕ çар ҕаçтĕсенҕе те пырат. Хĕрлĕ çарта халĕ сакăр çĕре йахăн клуп пур. Ултă пине йахăн çутта кăлармалли пĕҕĕк

ушкӑнсем пур. Иртнӗ хӗлле ҫавсенҗе ҫӗр пине йахӑн салтак вӗренҗӗҫ. Тата икӗ пине йахӑн пиплиоттеккӑсем пур. Ҫав пиплиоттеккӑсенҗе пилӗк мӗлйуна йахӑн кӗнеке. Ленин йулташ йаҗӗпе тунӑ кӗтессем те тӑвата пин ҫура ҫитеҫҫӗ. Ҫав кӗтессенҗе салтаксем ӗҫ ҫук җухне тӗрлӗ кӗнекесем вуласа хӑйсене хӑйсем ҫутта кӑлараҫҫӗ. Хаљҗен ҫӗнӗрен илекен салтаксем хушшинҗе пилӗк пайран пӗр пайӗ хут пӗртте пӗлменнисем пыраҭҗӗҫ. Халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ ҫарта хут пӗлменнисем ҫук. Наҗар пӗлекеннисене те тепӗр хут вӗрентеҫҫӗ. Ҫакӑн пек пысӑк ӗҫ ҫар ухшшинҗе курӑнсах тӑраҭ. Кашни нумай пӗлесшӗн тӑрӑшаҭ. 1923 ҫулта салтаксем пиплиоттеккӑсенҗен вулама ултӑ мӗлйун кӗнеке илнӗ, 1924 ҫулта вунӑ мӗлйун. Хӗрлӗ ҫар хушшинҗи пысӑк ӗҫе ҫул кӑтартса пыраканни—комуниссен партти. Ҫутта кӑларас ӗҫе вӗрентекеннисем нумайӗшӗ комуниссен парттинҗе тӑраҫҫӗ. Политтӗккӑ тӗлӗшӗнҗен вӗрентекеннисем пурте комуниссем. Вӗсен хушшинҗе ҫуррине йахӑн хресҗенсем. Хӗрлӗ ҫарта салтаксене вӗрентекеннисем унӑн тӑванӗпе пӗрех, анҗах нумайтарах вӗреннӗ, авантарах пӗлекен ҫынсем.

Воронӗш кӗпӗрнинҗи пӗр хресҗен Хӗрлӗ ҫар ҫинҗен ҫапла каланӑ: Ку Хӗрлӗ ҫар җӑнах та хамӑр ҫар, ӗлӗк офитсерсем патне пыма та ҫукҗӗ, Хӗрлӗ ҫарти кӑмантир пирӗн самай лайӑх йулташ, хуҭ те мӗлле ӗҫпе те ҫул кӑтартса пыраҭ.

Ку мӗне пӗлтеретши? Ку ак ҫакна пӗлтерет: Хӗрлӗ ҫар вӑрҫӑ тӗлӗшӗнҗен те, куљттурӑ тӗлӗшӗнҗен те питӗ пысӑк вӑй, ӗҫлекенпе хресҗенсен ӗҫне сых-

лакан ђăн йулташ. Кун çинђен епĕр мар, пирĕн тăшмансем те питĕ лайăх пĕлеççĕ.

## Хĕрлĕ çарта мĕнле технĕкка?

Пуршуйсен аллинђе вăрçă вăхăтĕнђе темиçе тĕрлĕ пăшалсем, йеропланșем, кассем, танкăсем, автомопилсем пулаççĕ, анђах вăрçă пулиђђен ун çинђен пире пĕлтермеççĕ. Халĕ технĕккă йапалисем ытти патшалăхри савăтсенђе питĕ нумай тăваççĕ. Вăрçă пуçланса кайсассăн тата нумайтарах хатĕрлеме пултараççĕ. Вĕсене Хĕрлĕ çарăн паттăрлăхĕпе кăна çĕнтерме пултараймастпăр, çавăнпа Канаш ирĕкĕн те технĕккăна вăйлăлантарас, тесе тăрăшмалла.

Ытти патшалăхри çарсем пиртен вăйлăрах халĕ. Çавăнпа пирĕншĕн самай пысăк ĕç Хĕрлĕ çарăн технĕккине вăйлăлантарасси.

## Сывлăш флођĕ йеплеши?

Ку тĕлĕшрен хаљхи вăхăтра вăрçăра питĕ кирли —самољет йатлă йероплан. Сывлăш флођĕ пулас вăрçăра питĕ пысăк усă кӳме пултарать. Ку флота пирĕн питĕ аван тесех калама çук халĕ, анђах ку тĕлĕшрен те ĕнтĕ ђылай тунă. Аванах ђăмăртаса хунă ђаçтсем пур. Ку тĕлĕшрен вĕçсе çӳреттерекен çыннисене, љотђĕксене, тупма та, вĕрентме те питĕ хĕн, апла пулсан та халĕ вĕреннĕ љотђĕксем ђылайах. Çавсене вĕрентмелли шкулсем те сахалах мар, Çав шкулсенђе питĕ лайăх хатĕрленнĕ љотђĕксене. технĕксене кăлараççĕ. Самољет текен йеропланșене хамăр савăтсенђе нумай тăваççĕ. Ку тĕлĕшрен епĕр ытти патшалăхсене йăлăнса тăмастпăр, мĕн кирлине

333/1

пурне те хамăр Канаш ирĕкĕн савăҌĕсенҌех тăватпăр.

## Тинĕс флоҌĕ мĕллеши?

Тинĕс флотне пур Ҍикĕсенҍи тинĕсре те туса лартма халех вăйхăват çитмест. Халҍрех пирĕн револҍутси пулиҌҌен пулнă Ҍухлă туса хурас пулаť. Ку тĕлĕшрен кивĕ карапсене тӳрлетсе пыраççĕ, ĕнтĕ çавсем çинҌе ĕçлеме командăсем хатĕрлеççĕ. Палтипе Хура тинĕс флоҌĕ патша вăхăтĕнҌен кайа мар ĕнтĕ. Акă нумайах та пулмасť, пирĕн флот Палтти тинĕсне тухса çӳрерĕ. Кунтан тĕрлĕ вĕтĕ патшалăхсем хăранă пек пулҌĕçĕ. Çавăнпа Анкли патшалăхĕ те хăйĕн флотне çав тинĕс çинҌе çӳреттерҌĕ. Çапла çӳреттерсе вăл пире те, ытти вĕт патшалăхсене те хăйĕн вăйне кăтартасшăн пулҌĕ, Канаш ирĕкĕ пирĕн çине тытăнсан, епĕр ăна хамăр вăйпа çĕнме пултаратпăр, тесе. Çакна кура пирĕн тинĕс флотне тата вăйлăрах тĕреклентерме тăрăшас пулаť.

## Çар промышлĕнăçĕ йеплеши?

Хĕрлĕ çарпа флотăн технĕккă тĕлĕшĕнҌен вăйĕ çар промышлĕнăçĕнҌен килет. ХалҌҌен çар промышлĕнăç ĕçĕ питĕ аванах пымасҌĕ. Канаш ирĕкĕ, иртнĕ çул мар, ĕлĕкхинҌен пуçласа çак ĕç çине питĕ хытă пăха пуçларĕ. Çавăнпа халĕ ĕнтĕ çар промышлĕнăçĕ авантарах ĕçлеме тапратрĕ. Çав савăтсенҌе ĕçлекенсен хушшинҌе те тистсиплинă хыта пуçларĕ. Хĕçпăшал тĕлĕшĕнҌен ĕлĕкхи çулсенҌен хăвăртрах тăва пуçларĕç. Акă пăшалсене Микулай патша вăхăтĕнҌен те хăвăртрах кăлараççĕ.

15194

## Хими тĕлĕшĕнђен ĕç йепле пыраҭши?

Çар ĕçĕнђе питĕ кирлĕ йапала хими промышлĕнăçĕ. Ку вăрçă вăрçма кăна кирлĕ мар, хамăр кулђтура çĕклентерес тĕлĕшрен те кирлĕ. Хими промышлĕнăçĕ аванлантăр, тесе Хĕрлĕ çар кăна тăрăшмалла мар, пĕтĕм халăх тăрăшмалла, мĕншĕн тесен, вăл çĕр ĕçлес тĕлĕшĕнђен те питĕ пысăк усă кӳме пултараҭ. Ку ĕçпе Хĕрлĕ çарпа хресђенĕн пĕрлешес пулаҭ. Акă тĕрлĕ хими йапалисемпе çĕре хутăштарса аванлантарасси Хĕрлĕ çара та кирлĕ, хресђене те кирлĕ. Çапла ĕнтĕ хими промышлĕнăçне аванлатни пĕр йенђен тырă пулă тăвассине пулăшаҭ, тепĕр йенђен вăрçă вăхăтĕнђе хамăр Канаш ирĕкне сыхлама параҭ.

## Йалан асра тытмалла.

Ахалђ мар, Анкли пуршуйсем Канаш ирĕкĕ ђиккинђен инçе те мар çӳресе пирĕн ĕçлекенпе хресђенсене хăраткалаççĕ. Кăна курса пирĕн тата хытăрах Канаш ирĕкĕн алăкĕсем çинђе тĕреклĕ çарсем пулђăр, пирĕн вăй пуршуйсене хăрушăн курăнтăр, тесе тăрăшмалла.

Йалсенђе ку тĕлĕшрен мĕн тума пултараççĕши? Ђăн малтан, пуршуйсем йалан вăрçă пуçлассине астуса тăрас пулаҭ. Мĕн ђул пуршуйсем ĕçлекенпе хресђене хĕстереççĕ, çавăн ђул вăрçă тухассине кĕтерех тăрас пулаҭ. Кăна астуса тăнипе кăна мар, тата акă çакна ăнласа илес пулаҭ: пуршуйсем пирĕн çийе йероплансемпе, тĕрлĕ хими йапалисемпе жилсессĕн, пирĕн каллах хуçайства малалла йарас

ӗҫ ђаранат̆. Каллах выҫлӑх, тата ытти нуша пуҫланса кайат̆. Акӑ халӗ Киттай ҫине пӑхар-ха: хӗҫ-пӑшалпа та хӑйне хӑй сыхлаймаст̆.

Ҫитменнине, пирӗнни пек Хӗрлӗ ҫарӗ те ҫук. Пирӗн Хӗрлӗ ҫар пур, вӑл халиђђен ӗҫлекенпе хресђенсен вӑйне аванах кӑтартрӗ. Питӗ кирлӗ пулсан, тепӗр хут та кӑтартма пултарат̆. Фрунҫе йўлташ ҫавӑн ҫинђен Канашсен пуххине тӗпле каласа пађӗ Кун ҫинђенех Хӗрлӗ ҫарӑн пурнӑҫӗ те калат̆,—вӑл, пурнӑҫне шеллемесӗр, сыхлас ӗҫе кӑна тумарӗ, тата ытти нушаран та пулӑшса пыђӗ: супотниксенђе ӗҫлерӗ, выҫӑхнисене тӑрантарђӗ, хӑшхӑш йалсен шефӗ пулса тӑђӗ, хӑй пайукӗнђен инвалитсене те пађӗ. Ӗҫхалӑхӗпе пӗрлешў тытассине Хӗрлӗ ҫарти халђхи ҫамрӑк салтаксем те манмаҫҫӗ. Хӗрлӗ ҫарӑн хаҫатсене вуласа пӑхатна, Хӗрлӗ ҫарӑн пухӑвӗсенђе итлесе тӑратна—пур ҫӗрте те пӗр шухӑш сисӗнет: ӗҫ халӑхне мӗнле те пулсан пулӑшас, тени. Салтаксем пӑшалпа кӑна ӗҫлемеҫҫӗ, йалсене салансан йеппле те пулсан ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫе пулӑшас, тесе тӑрӑшаҫҫӗ. Акӑ 1902 ҫулта ҫуралнисем, лакӑрсенђен вӗренсе тухсан, йалта кирлӗ тӗрлӗ ытти ӗҫсене те вӗренме тытӑнђӗҫ. Ҫакна пӑхсассӑн, хресђенӗн те Хӗрлӗ ҫара пулӑшу парас пулат̆. Топрисывниксене, переменниксене вӑхӑтра пухма пулӑшас пулат̆. Пухӑнмалла ҫӗрсене тўрлетсе аванлатас пулат̆. Питӗ кирли вӑл,— присӑва кӗрекенсен хушшинђе пӗри те хут пӗлменни ан пултӑр, тесе тӑрӑшас пулат̆.

Присӑв вӑхӑтӗнђе йунӑшпа, тата тарса йулакансем ан пулђӑр, Хӗрлӗ ҫара кайакан салтаксен,

инвалитсен çемйисене халăхпа пулăшу парас пулаť. Çемйине пулăшу памасан, Хĕрлĕ çарти салтак вĕреннĕ ђух та йалан кил çинђен шухăшлама пултараť. Йал канашĕсен, ытти сынсен те Хĕрлĕ çартан килекен çырусене тавăрса çырса йарас пулаť. Çырусенђе мĕн ыйтаççĕ, çавна туса парас пулаť. Хĕрлĕ çартан киле тавăрăннă кăмантирсемпе, салтаксен хуçайствисене йусас тĕлĕшпе те, ытти тĕлĕшпе те пулăшас пулаť. Ĕçхалăхĕн Хĕрлĕ çар хаçађĕсене, шурналĕсене вуласа çар ĕçне пĕлерех тăрас пулаť. Йалти клупсенђе, вуламалли çуртсенђе çар ĕçне вĕренме çар кĕнекисем валли кĕтессем хăварас пулаť, мĕншĕн тесен, вăл çара вăйлатма пулăшаť. Сывлăш флођĕпе хими ĕçне пулăшма тунă ушкăнсенђе виçĕ мĕлйуна йахăн ђленсем тăраççĕ, çавсем хушшинђе хресђентен çукпа пĕрех. Çавсенђе пĕр мĕлйун та пулсан хресђен пултăр, тесе тăрăшас пулаť. Кăна хут çинђе кăна мар, ĕçпе тăвас пулаť, урăхла каласан, хресђенсен те ку ĕçе малалла йарас, тесе тăрăшас пулаť.

Йалта кулђттурă тĕлĕшĕнђен, хуçайствă тĕлĕшĕнђен, тунă пур ушкăнсем те пăшал айне тăма хатĕр пулас пулаť. Пулас вăрçăра, пур тĕлĕшрен те Хĕрлĕ çар нумайтарах кирлĕ пулаť. Фрунçе йулташ Канашсен пухĕвĕнђе çапла каланă: вăрçă пулсан, питĕ вăрăма пырĕ, вăйа питĕ пĕтерĕ, вăл вăрçăра пуршуйсем пĕтеççи? пире пĕтереççи? тенĕ. Пирĕн хамăрăн йепле те пулсан вĕсене пĕтерес пулаť. Çавăнпа та Ленин йулташ ак çапла каласа хăварнă: Хуť те хăçан та хатĕр пулăр!! тенĕ.

15194

28к.

Хакĕ 8 пус.